25-77

М. ТРУБИНА.

# ХĔРЛĔ КАЛСТУК

## АЂАСЕМ ВАЉЉИ КАЛАВ

ЂĂВАШ РЕСПУПЛĔКĔН КĔ-
НЕКЕ КĂЛАРАКАН УЙРĂМ

ШУПАШКАР ○ ○ ○ 1925 ÇУЛ

М. ТРУБИНА

# ХĔРЛĔ КАЛСТУК

## АЂАСЕМ ВАԒԒИ КАЛАВ

Ретактăрĕ ТОКСИН

ЂĂВАШ РЕСПУП. КĔНЕКЕ КĂЛАРАКАН УЙРĂМ

ШУПАШКАР — 1925

Чувашлит № 1116. Печ. 3000 экз.

Гор. Чебоксары типография Чувашиздата.

## Хӗрлӗ калстук.

I

Вӑрманти полустанкӑра поест ҫинҫен виҫӗ-тӑвата ҫӑваш, тата пӗр 10—12 ҫулхи аҫа тухса йулҫӗҫ.

Аҫа шурӑ кӗпепе, кӗске хӑмӑр йӗмпеле. Мӑйне хӗрлӗ калстук ҫыхнӑ. Пуҫӗнҫе хӗрлӗ ҫӑлтӑрлӑ шурӑ шлепке. Уринҫе хура ҫулхапа пушмак. Ҫулхи, вӑрӑмскер, аҫа урисене йаштак кӑтартаҭ. Аҫанӑн пӗтӗм пӳ-сийӗ, уткалани, пӑхкаласа тӑни илемлӗ.

Ҫӑвашсем полустанкӑран тухсанах вӑрман хӗрне ҫӗлӗм туртма ларҫӗҫ. Аҫа ҫурӑм хыҫӗнҫи пӗҫӗк кутамкине ҫӳлерех хӑпартса ҫыхрӗ те, вӑрман сукмакӗпе ҫӑмӑллӑн утрӗ.

Ҫуллахи кун каҫ йеннелле сулӑннӑ. Хӗвел ҫалӑпшӑн пӑхаҭ, йывӑҫ ҫулҫисем витӗр сукмак ҫине тӗл, тӗл ӳккелет. Ваҥук вӑрмана кӗрсенех унталла, кунталла пӑхкаларӗ. Тӑван вӑрман, тӑван ҫӗр-шыв. Ваҥук ку вӑрманти кашни йывӑҫа, кашни шӗшкӗ тӗмине тенӗ

пекех астăват. Акă сукмак хĕрринҫе кукăрмакăр ват улмуççи ларат. Çак улмуççи çинҫен Ваҥук выçлăх çул пĕр витре улма пухнăҫҫĕ. Улмисем вĕтĕ, сип-симĕс, çăвара ҫикмелле мар йӳçĕҫҫĕ. Ваҥук амăшĕ çав улмасене кăмакана хывса пĕçерсе аҫисене çитеретҫĕ. Выçлăх мĕн, мĕн çимен-ши? Выçлăх çул Ваҥукăн ашшĕ, икĕ йăмăкĕ вилҫĕç. Ваҥук та выçлăх çул килте пурăннă пулсан вилетҫĕ пуҫ. Ыр Ваҥука амăшĕ çине тăрсах вулăсри ытти аҫасемпе пĕрле Мускава йаҫĕ. Мускава кайман пулсан Ваҥук пайан кун та çак сукмакпа: хаҫ киле çитетĕп, аннене куратăп, тесе хавассăн утса пынă пулĕҫҫĕ-ши? Выçлăх çул, ăсран кайман çул... Сарă çӳçлĕ, йалтăрка куçлă пĕҫĕк Саҥук халĕ те Ваҥук куç умĕнҫе. Çулла, ыраш çăкри, паранкă çинĕ ҫух, Саҥук ҫупса çӳресе выҫатҫĕ. кулатҫĕ. Кĕркунне, çимелли пĕтсен, Саҥук улшăнҫĕ. Çимелли йĕкел пашалу çеç. Саҥукăн илемлĕ пиҫĕ кăн-кăвак пулса кайрĕ. Тутисем хуралҫĕç. Икке кайнă ҫупса çӳрекен Саҥук утайми те пулҫĕ. Кунĕ кунĕпе пукан çинҫе ларса: мемме-е, мемме-е тесе аллисене кăнтаратҫĕ. Ыран вилес тенĕ ҫух Саҥук пукан

çинҫе сулкаланса ларат̆. Йӗкел пашалуне çăварӗнҫе макăлтаттарса нăҫăк, нăҫăк ӗмет. Амăш аҫана аҫашласа сăпка çине выртарҫӗ. Саӈҫук çӗрле сăпка çинҫех вилсе выртнă...

Тепӗр икӗ ернерен Ваӈҫукăн ашшӗ те шыçăнса кайса вилҫӗ. Вара тата 5 çулхи Малани вилҫӗ. Ăна пытарнă кун кантуртан аҫасене пухса Мускава йамалли хут килҫӗ. Ваӈҫук амăшӗ: ашшӗ вилҫӗ, пӗҫӗккисем вилҫӗç, Ваӈҫук та пулин çăлăнтăр тесе Ваӈҫука Мускава йама пит çине тăҫӗ. Ваӈҫукпа амăш кантура çурран карӗç. Вулăсра аҫасем пухăнса çитсен, Мускава йаҫӗç. Ваӈҫук амăшӗ пӗр пӗҫҫен тăрса йулсан, килне хупса Çӗрпӳве кайрӗ. Унта вăл пӗр: шкула çисе пурăнасшăн ӗçлеме кӗҫӗ...

Çак шухăшсемпе Ваӈҫук вăрмантан тухрӗ. Веç, ав, ыраш пусси урлă Ваӈҫукăн тăван йалӗ курăнҫӗ. Йалӗ, пытанса ларнă пек, пӗр лапăра ҫăмăртанса ларат̆. Ҫăн малтан йалти ҫиркӳ тăрри çут хӗресне йалтăртаттарса курăнҫӗ. Ҫиркӳ çумӗнҫе икӗ пысăк çурт пуп çурҫӗсем. Вара улăм витнӗ çуртсем, йывăç пахҫисем курăнҫӗç. Ваӈҫук хăйсен улăм витнӗ лапҫăк пӳртне курсан ҫӗри хăвăртрах картлатма

тытӑнҫӗ. Ҫинҫе, ҫӑмӑл пушмаклӑ урисем хытӑрах утӑмлама пуҫларӗҫ. Ваҥук ыраш пусси йап-йака, илемлӗ сукмакӗпе хӑвӑрттӑн шок, шок, тутарат. Шӑркана ларнӑ вӑрӑм ыраш Ваҥука пуҫӗнҫен те, хулпуҫҫинҫен те сӗртӗнсе тутлӑ шӑршӑ ҫаптарат.

Кӗтӳ кӳртес вӑхӑтра Ваҥук йал патне ҫитрӗ. Тусан мӑкӑрлантарса кӗтӳ улиҫенелле кӗрет. Кӗтӳ кӗнӗ ҫӗре хӗрарӑмсем, аҫа-пӑҫасем пухӑнса тӑнӑ. Ваҥука вӗсем патӗнҫен иртсе кайнӑ ҫух никам та палламарӗ. Паллама та ҫук ҫав. Ваҥук Мускава кайнӑ ҫух пӗҫӗк, 7—8 ҫулхи ҫӗтӗк-ҫатӑк наҫар аҫаҫҫӗ. Хаҫ вӑл, илемлӗ пӳ-силлӗскер, ҫӑмӑллӑн урам тӑрӑх утса кайрӗ. Пӗр карҫӑк хӗвеле хупласа, аллине куҫӗ ҫинҫе тытса: ӑҫта кайат-ши ку ырӑс аҫи, тесе пӑхса йулҫӗ. Икӗ аҫа, йӳлепилӗкӗн, ҫӗтӗк ҫанӑлӑскерсем пушписемпе сысна ҫӳрисене хӑваласа ҫупаҫҫӗ. Ваҥука курҫӗҫ те, ҫаранса пӑхса тӑҫӗҫ. Пӗри ҫӗлхине кӑларса витлесе илҫӗ те: ӑҫта кайатӑн хӗрлӗ мӑй, хӗрлӗ пӗсехе тесе кӑшкӑрҫӗ. Урамри ҫынсем пур те кӗр-р-р кулса йаҫӗҫ.

— Ҫӑн хӗрлӗ мӑй, хӗрлӗ пӗсехе! ӑҫта кайат-ши вӑл?

„Хĕрлĕ мăй“ никама пĕр сăмах ҫĕнмесĕр килелле утрĕ. Васкаса утаҭ. Тăван йал, ҫуралнă кил! Ҫухăн пулсан та пит паха.

Ваҥук амăшĕ 45 ҫула ҫитнĕ. Ҫакăнҫул пурăнса та Ваҥук амăш пайанхи пек пысăк савăнăҫ курман. Карташĕнҫе каҫака суса ларнă ҫух Ваҥук амăшĕ Ваҥука хапхаран кĕнине курсан, хытса кайнă пек пулса пăхса тăҫĕ. Хăй куҫне хăй шанмаҭ. Вара сасартăк куҫҫуљ йухтарса Ваҥук патне ҫупса пыҫĕ, ывăлне пӳрте йертсе кайрĕ. Кăшт тăрсан Ваҥука курма хурăнташсем, кӳршсем пыҫĕҫ. Амăшĕ аҫине ҫăмарта пĕҫерсе, сĕтпе ҫей ĕҫтересшĕн ĕштеленсе ҫӳрет. Хăй ăшăнҫе аҫипе умсанса савăнаҭ.

— Куҫ тулли вĕт! тет, Ваҥук амăш хăй ăшăнҫе, ывăлĕ ҫинҫен куҫне илмесĕр, ăна ҫăмартине те шуратса, ҫейне те тултарса пара҄ҭ. Виҫ ҫул хушшинҫе мĕн тĕрлĕ ӳссе, тасалса кайнă. Калаҫассине те йепле аван калаҫаҭ. Кутамкинҫен темиҫе кĕнеке кăларса хуҫĕ, хут вĕреннĕ пулмалла...

Амăш савăнăҫĕ вĕҫĕмсĕр. Ваҥука курма пынă хурăнташсем, кӳршсем саланса пĕтсен, амăшĕпе ывăлĕ карташĕнҫе ҫылайҫен

сӑмахласа ларђӗҫ. Ҫутӑ ҫӑлтӑрсем тухсан тин Ваӊђукпа амӑшӗ лупас айӗнђи шӑналӑк ӑшне кӗрсе выртрӗҫ.

## II.

Ваӊђук тӑван йалӗ, Лапра касси, пӗтӗм вулӑсӗпе пӗр тӗттӗм йал. Вулӑсри ытти йалсенђе комсомол йађейккисем, вуламалли ҫуртсем пур. Лапра кассинђе унпек кунпек йапала ҫук вара. Револђутсийӗн кулђттурлӑ хумӗсем ҫак лапӑра пытанса ларакан йала ђасах пырса ҫапӑнман пек туйӑнать. Шкулӗ те пулин, выҫлӑх ҫул хупӑннӑранпа, уҫӑлмасть.

— Мӗн тулалла пирӗн хамӑр йалта шкул уҫса, теҫҫӗ Лапра ҫыннисем: халӑха пустуй расхут. Вӗренес тесен Хир кассине те кайса вӗренме пулать: 5—6 ҫухрӑм ҫеҫ-ке!

— Кирлӗ мар пире шкул. Халӗ шкулсенђе ӗлӗкхи пек путлине вӗрентмеҫҫӗ, тет пуйан Кришша. Хӑй вӑл, хӑйне хӑй пит аван ҫын вырӑнне хурать. Ҫиђӗ султанпа ђиркӳ стрӑстинђе ҫӳрет, пуйан Кришша хӑй икӗ ывӑл ађине ҫынсенђен вӑрттӑн пуп хӗрӗ патне ҫӳретсе вӗрентет. Нина Петровна ӗлӗкхи пек, ӗлӗкхи кӗнекесемпе саккун поши те вӗрентет.

Лапра кассинҭи лаша пур, пурӑнӑҫ пуртарах ҫынсем, аҭисене Хир кассинҭи шкулта вӗрентеҫҫӗ. Ҭухӑн ҫын аҭисем, тумтир ҫук пирки 5—6 ҫухрӑма вӗренме кайаймаҫҫӗ. Ҫавӑнпа вара 30—40 шкулта вӗренмелле аҭасем урам тӑрӑх йытӑ хӑвалаҫҫӗ.

Выҫлӑх иртни виҫӗ ҫул тулҭӗ. Кӗркунне ҫитсе килет. Лапра ҫыннисем хирти ӗҫсене пуҫтарҭӗҫ. Кӑҫал тырӑ наҭар мар. Пурин те ҫителӗклӗ. Шкул расхутӗнҭен те халӑхӑн хӑрамалла мар пек, анҭах Лапра ҫыннисем пӗри те шкул уҫас тесе сӑмахламаҫҫӗ. Кӑҫал та ҭухӑн ҫын аҭисен шкулсӑрах иртермелле пулӗ-ши?

Малтан Ваӈук Мускавран килсессӗнех аҭасем ӑна „хӗрлӗ мӑй, хӗрлӗ пӗсехе“ тесе мӑшкӑлатҭӗҫ. Халӗ пӗтӗм Йалти вак-тӗвек аҭапӑҭа Ваӈук патне выҭама ҫӳреҫҫӗ. Ваӈук аҭасемшӗн ытла тӗлӗнмелле маттур туйӑнаҭ. Ваӈук темле вӑйӑ та, темле йурӑ та, тем ҫинҭен каласа кӑтартма та пӗлет. Кунӗ кунӗпе пекех аҭасем Ваӈукпа пӗрле киремет сӑрт ҫеремӗ ҫинҭе салтакла та, темӗн тӗрлӗ имемлӗ вӑйӑсем те выҭаҫҫӗ, йурлаҫҫӗ. Ваӈук йулташӗсене Мускавра хӑй пурӑнни ҫинҭен мӗн курни, мӗн

Хӗрлӗ калстук.

илтни ҫинҫен кала кала кӑтартнӑ. Тӗттӗм йал аҫисемшӗн Ваҥук каласа кӑтартни ытла тӗлӗнмелле туйӑннӑ. Пионер йуррисене, вӑййисене кашни аҫа вӗренсе ҫитнӗ. Пионер, комсомол мӗннине те вӗсем Ваҥук каласа тӑнлантарнипе пӗлнӗ. Ҫывӑрма выртсан, хӑшӗ пӗри хӑйсене хӑйсем пионера кӗнине тӗлӗкре курнӑ. Вӑрансан ҫав тӗлӗк те вӗсене такҫанҫен савӑнтарса ҫӳренӗ. Пионер отретне ҫырӑнасшӑн вӗсем пит ҫуннӑ.

— Хут пӗлмесен епир пионер пулаймастпӑр, тет Ваҥук. Пионерсем вӗсем вӗренеҫҫӗ. Пирӗн те хут вӗренес пулаҭ. Пире шкул кирлӗ. Шкул уҫма комсомол йаҫейкки урлӑ ыйтӑпӑр. Пирӗн пиҫҫесем, комсомолсем, пире шкул уҫтарса парӗҫ тесе, Ваҥук хӑй йулташӗсене шантарнӑ. Аҫасем шкул пулассине кӗтсе тӑнӑ. Шкул уҫӑлас шанҫӑка вӗсем пӗҫӗк ӑсӗсенҫе тытса ҫӳренӗ.

Пӗр вырсарни кун пуйан Кришша арӑмӗ иртерех вут хутса ҫунтарса ҫимӗҫсем пӗҫерсе кӑларҫӗ. Аҫисемпе ҫиркӳве кайас тесе хатӗрленет. Икӗ ывӑл аҫи, Ваҫӑпа Шуркка, сӗтел хушшинҫе темӗн пӑшӑлтатса лараҫҫӗ.

— Мĕн пăшăлтатса ларăттăр есĕр. Тăхăнăр ҫасрах таса кĕпесем те, аттăр ҫиркĕве, терĕ амăшĕ. Аҫисем нимĕн те шарламарĕҫ. Икĕшĕ те алкумне вĕлт тухрĕҫ те кайрĕҫ. Алкумĕнҫе каллех темĕн пуплеме тытăнҫĕҫ.

Кăшт тăрсан, 10 ҫулхи Ваҫă алăка уҫрĕ те;

— Анне, епĕр пайан ҫиркĕве пымастпăр, аҫасен пухтине кайатпăр, терĕ.

— Ах, путсăр аҫасем! Йеппе вăл ҫиркĕве каймасан! Хăвăр уҫҫитĕлнитсă Нина Петровна мĕн калат. Каллах ҫав Ваҫук патне кайатăр пулĕҫке! Ах ку Ваҫука! Илтмени есĕр, йĕнер паҫăшкă кухҳарки пионерсене ан тихрист ҫĕпписем тенине. Ан кайнă пултăр ҫав Ваҫук патне. Аҫу пĕлсен ҫапса ҫурат, персе вĕлерет!

Ҫан ҫапса йаҫĕ. Пуйан Кришша арăмĕ пустав хыс, пушмак ҫулха тăхăнҫĕ те, турăш умне тăрса сăх сăхса ҫиркĕве тухса кайрĕ,

Аҫасем амăш ҫиркĕве тухса кайсанах анкарти хыҫпе киремет ҫеремне ҫупрĕҫ киреметре аҫасем нумай пухăннă мĕн.

Ҫирĕм-вăтăр аҫа пур. Пĕр айкинерех Ваҫукпа пĕрле виҫĕ пысăк йут аҫасем пур. Ваҫăпа Шуркка аҫасен ушкăнне кĕҫĕҫ.

— Камсем ку пысăккисем, тесе ыйтрĕ Вађă çаптарkка кĕпеллĕ ађаран.

Лешĕ: вулăсри йађейккăри комсомолсем, терĕ те, хăлхисене тăратса мĕн каланине итлеме хатĕрленђĕ.

Ваңук хăй йулташĕсем пионер отретне çырăнас тенине йађейккăна пырса каласан, пĕтĕм йађейккă ура çине тăђĕ. Ђасрах пионер отређĕн йалавне хатĕрлесе, комсомолсем Лапра йалне ађасен ђаплă пухуне иртерме килђĕç.

Кăтра çӳçлĕ, хура кĕпеллĕ çӳлĕ комсомол ађасене саламлă сăмах калаť:

...Есĕр ĕнтĕ пионерсем. Пионер вăл комсомол шăлнĕ. Пионер вăл пĕђĕкрен: етем хушшинђи пусмăрлăха хирĕç ыратăп, çĕнĕ йĕркешĕн кĕрешме хатĕр çапăçмалла пулсан. Пионер хăй ӳт-тирне те, ăшри шухăшсене те комунислă пурăнăç вађђи çирĕплентерсе, аванлатса ӳсмелле. Савнă шăллăмсене пионерсене, вулăсри комсомол йађейккинђен салам калатăп. Есĕр комунислă шухăшсемпе ӳссе, сире хамăр вырăна тăма сунатăп. Сирĕн отрет вађђи епĕр йалав илсе килтĕмĕр....

Ађасем пур те шăпăрт, сывламасăр итлесе тăраççĕ. Комсомол хаçат тĕркине сӳтрĕ

те, савалана патак çинҫе хӗрлӗ йалав куранҫӗ. Йалава комсомолӗс Ваҥук тыттарҫӗ.

Хӗрлӗ йалав çилпе вӑр, вӑр туса хӗвел çинҫе йалкӑшса кайсан, аҫасен пӗҫӗк ҫӗрисем кӑртах сикрӗç. Пуринҫен ытла Ваҥук ҫӗтресе хӗпӗртесе кайса, йалава аллипе хытӑ тытрӗ.

— Сирӗн Ваҥук çырса пана тӑрӑххӑн кунта пионер отретне 18 аҫа кӗнӗ. Хаљ ку пухура 18 çеç мар. Çырӑнманнисем килсе çырӑнӑр кунта терӗ çав саламлакан комсомол.

Виç-тӑвата аҫа пырса çырӑнҫӗç.

Шурккӑпа Ваљӑ хӑйусӑрланса комсомол патне пырса тӑҫӗç.

Пирӗн, атте... атте... ҫиркӳ старӑсти. Пирӗн пионера çырӑнма йураҭ-ши? терӗ Шуркка

— Иураҭ. Хӑвӑр пионер шухӑшлӑ пулӑр. Çырҫӗ.

Хӗрлӗ йалав варкӑшаҭ. Хут пӗлекен аҫасем йалав çинҫе çырнине вуласа илҫӗç.

Илемлӗ, ылтӑн тӗслӗ сӑрпа:

Хатӗр пул! Çиновйӗв йаҫӗпе Лапра çамрӑк пионерсен отреҫӗ, тесе çырнӑ.

Тепӗр лутрарах, сарлака пит-куҫлӑ комсомол кӑсйинҫен хаҫатпа ҫӑрканӑ хӗрлӗ калстуксем кӑларҫӗ.

Хамӑр шӑллӑмсене епӗр пионер парни паратпӑр. Кама Ваҥук малтан ҫырнӑ, ҫавсем килӗр, илӗр ҫак калстуксене! 18 аҫа йӗркеленсе ҫеретпе пырса хӗрлӗ калстуксем илҫӗҫ, Ваҥукӑн пекки.

Пурте илсессӗнех, Ваҥук пек ҫыхрӗҫ.

— Насар пиҫҫе Ваççилийӗ мана та пионера ҫыртар тенӗҫҫӗ. Хӑй вӑл лаша кӗтӳ кӗтме кайнӑ, килеймест. Ваççилий Насарӑв, ҫыр, терӗ пӗр аҫа. Комсомол ҫырҫӗ.

— Пирӗн куккасен Тавитне те ҫыр. Ӑна ашшӗ аҫасен пуххине кӑлармасӗ. Пайан ашшӗ Тавите иртемпех лаҫа хупса лартнӑ. Тавит мана шӑтӑкран: мӗнле те пулсан мана та пионера ҫыртар, терӗ. Тавит Макҫимҫ йатлӑ, терӗ тепӗр аҫи.

— Йурӗ, ҫырӑп. Ҫырҫӗ.

— Сире пит шкул кирлӗ, терӗ саламлакан комсомол.

— Сирӗн аҫусем шкул ваҫҫи хваттер тупса парсан, ӑна ӑшӑтма вут турттарма пулсан, сирӗн пата уҫҫи гӗл йарӗҫ. Тухса кайнӑ

пуп çурђĕ пушах лараї. Çав çурта шкул вађђи йусасан сирĕн пит аван шкул пулĕђђĕ.

— А, вăл çурта ыран халăх арман хуçине сутаї, терĕ йал канаш пуçлăх ывăлĕ.

— Йурĕ, йурĕ. Есĕ ку хыпара ырах пĕлтертĕн. Сире шкул уçса парас шухăшпа епĕр пĕтĕм вăйран мĕн тума пултарнине тума тăрăшăпăр. Вăй çитнĕ таран тапаçланăпăр. Епĕр ыран килетпĕр, халĕ ĕнтĕ саланар.

Ађасем кĕр тăђĕç те, Ваңук вĕрентнĕ пионер йуррине алăсем çĕклесе йурласа йађĕç. Ађа-пăђа сасси йанăраса саланса кайрĕ. Йурласа пĕтерсен, ађасем пĕркеленсе тăђĕç те, йалалла илемлĕн харăс утса кайрĕç. Хĕрлĕ йалав вăркăшса, хĕвел çинђе çиçсе пыраї.

III

Тепĕр кун пĕтĕм пионерсем кăнтăрларанпах Ваңуксем патĕнђе вĕркĕшеççĕ. Ĕнерхи комсомолсем те, виççĕшĕ те унта. Карташĕнђе ађасене вĕрентеççĕ. Мĕнле тусан аван пулĕ тесе сўтсе йаваççĕ. Кĕркури Михали патĕнђен туй параппанĕ кайса илсе хатĕрлерĕç. Халăх çинђе мĕн мĕн сўтсе-йавнине илтелесе çўреме 6 ађа суйларĕç.

Каçалапа халăх та пухăнма тытăнҫĕ. Ватăрах çынсем кĕске сăкмансем тăхăнса хуллен иккĕн-виççĕн ҫиркӳ патнелле утаççĕ. Халăх пуххи ҫиркӳпе йунашар пушă çурт çумĕнҫе пухăнаҭ.

Ку çурта 15 çул малтан халăх хăй вăйĕпе пупа ларгса панăҫҫĕ. Çамрăк пуп ват пуппала килĕшсе пурăнаймарĕ те, тухса кайрĕ. Çын пурăнман çурт ҫасах йапăхланҫĕ. Халҍ ку çуртăн 8 ҫӳреҫинҫе те куç кантăк çук. Икĕ кăмакине те ишсе пĕтернĕ.

— Тепрер çул ларсан, ку çурта пĕрер пĕренен салатса пĕтерĕç. Ăна луҫҫă сутас пулаҭ, тесе шут турĕç Лапра çыннисем. Калана—тунă. Пайан çак çурта арман хуçине сутма пуху пуçтарăнаҭ. Арман хуçи ăна хăй уйăрăлса тухакан ывăлĕ ваҍҍи илесшĕн. Сутас та, укçине мишавайа çĕр касса панăшăн тӳлес. Пит манерлĕ пулаҭ: мишавайа тӳлеме халăх çинҫе пĕр пус укçа та çукҫĕ-ха.

Çак шухăша çынсем ҫылайĕшĕ тытаççĕ.

Лапҫăк картуслă Иван ҫĕлĕмне хытă шăлкка çыртнă та, хăй патĕнҫе тăракан 7—8 çын: Кун пек çурт сутса та ĕçмесен, хăçан ĕçес? тет. Хăй ҫĕлĕмне мăкăрлантарса çĕре

лађлаттарса сурат̆. Иван шухӑшне те хапӑл тӑвакансем пур: пуринђен ытла кайри кас куштанӗсем. Вӗсем çуртне сутатђенех арман хуçинђен 31 тенкӗлӗх ерех ӗçнӗ.

Пӗр ватӑ старик хулайне „Канаш“ хӗстернӗ те ђалӑшса кайнӑ картлашка çинђе ларат̆. Старик патӗнђе 3—4 çын тӑраççӗ. Хуллентерех пуплеççӗ. Вӗсен шухӑшӗсем ак çапла:

— Ку çурта сутас мар, шкул вађђи йусас. Анђах куштансем шкула хирӗç. Халӑх çинђе каласан та çӗнтерейменӗр...

— Куштансене ӑçта çӗнтерен. Çуртне сутатпӑр тесе кашни пасартах ӗçеççӗ тет те.. терӗ старик. Хӑй хаçатне кӑларђӗ те, пӑшӑлтатса вулама тытӑнђӗ.

Пуйан Кришшанӑн, унпала пӗр майлӑ çынсен урӑх шухӑш. Пуйан Кришша питне куçне йӑвашлантарса хуллен сасӑпа калат̆.

— Ку çурта сутас та, укçине ђиркӗве парас. Çурт укçи ђиркӗве тивӗçлӗ, мӗншӗн тесен, ку çурта пупшӑн, ђиркӳшӗн тунӑ. Çапла каларӗ те, йӗри тавра хӑй шухӑшлӑ çынсене шыраса пӑхкаларӗ. Хӑшӗ пӗри: çапла, çапла тенине илтсен, пуйан Кришшанӑн

кӑмӑлӗ ҫемҫелсех кайрӗ. Вӑл кусне мӑҫ, мӑҫ хупса тата ытларах йӑвашланса кайрӗ.

Акӑ йака тумланнӑ арман хуҫи те пухӑва ҫитрӗ. Патнерех ҫывӑхарсан картусне кӑшт хӑпартларӗ. Ӑна хирӗҫ халӑх хушшинҫен темӗнҫул картус, ҫӗлӗксем хӑпартланса каллах лапсака ҫӳҫлӗ пуҫсем ҫине ларҫӗс. Арман хуҫи куштантараххисем патнелле сулӑнса тӑҫӗ.

Халӑх сӗрлет. Пӗри апла, тепри капла тӑвасшӑн. Шкул уҫасси ҫинҫен калакан никамах та ҫук. Халӑх хушшинҫе пӗҫҫен виҫ тӑватӑ аҫа пысӑк ҫынсен ушкӑнӗсенҫе шӑтара шӑтара ҫӳреҫҫӗ. Акӑ пӗр аҫи тӑнласа тӑҫӗ те, ҫынсем хушшинҫен хӑвӑрт витӗр витӗр тухса вӗлт тухрӗ.

Урам тӑрӑх шӑнкӑрав сасси илтӗнҫӗ. Кантур йамшӑкӗ тӳрех Ваҫуксен карташнелле ҫуптарҫӗ.

Ҫылайҫҫен кӗрлесен, халӑх ҫурта 200 тенкӗлле сутма йышӑнҫӗҫ, анҫах Иван виҫ витре ерех хур, тата 200 тенкӗ ҫумне, тесе кӑшкӑрат.

Сасартӑк параппан сасси илтӗнҫӗ. Урам тӑрӑх тӳнк, тӳнк! илтӗнет.

Пурте параппан сасси илтённё йенелле пăхрёç.

Урам тăрăх хёрлё йалавпа, параппан çапса аҫасем салтаксем пек утса пыраççё. Вёсен хыççăн виçё кантурти комсомолпа вулăс канашён ҫленё пырат.

— Ку мёнле йапала? Мёне пёлтерет, тесе çынсем тёлёнсе хытса кайрёç. Çăвара карса пăхса тăраççё.

Пионерсем халăх пуххи умне пырса тăҫёç те, пёр çын пек харăс:

— Да-ешь шко-лу! тесе кăшкăрса йаҫёç.

Вулăсри канаш ҫленё халăх ăшне кёрсе кайрё те, папкине хул айёнҫен кăларса:

Мана ҫерет урлă сăмах калама парăр-ха терё.

— Кала, кала! терёç шкул уçас шухăшлă çынсем. Вёсем пионерсене, комсомолсене, тата вулăс канашён ҫленне курсанах хăйсен ҫирё ăшă вырăна ларассине сисрёç.

— Есёр кунта çурт сутма пухăннине илтрёмёр епёр. Кун çинҫен пионерсемпе комсомолсем Вулăс канашне пёлтерҫёç. Йулташсем! Сирён çак çурта сутас пулмаст, Есёр ку çурта йусасан, вутне турттарса пама

пулсан, епӗр сирӗн йалта шкул уçас тетпӗр. Пăхăр, йулташсем, сирӗн хăвăр аҫăрсем кунта пӗрлешсе шкул ыйтма килнӗ. Вӗсем вӗренесшӗн çунаççӗ. Çурт пур çинҫе йепле есӗр ку çурта сутса аҫăрсене шкулсăр хăварăр.

Халăх сӗр-р-р! кӗрлесе йаҫӗ.

Кăтра çӳçлӗ, хура кӗпеллӗ комсомол вӗренни пит кирли çинҫен хӗрӳллӗ сăмах каларӗ.

— Ленин Канаш Сойусӗпе пӗр хут пӗлмен çын ан пултăр, тенӗ, терӗ комсомол йулашкинҫен. Шкул уçмасан, есӗр Ленин сăмахӗсене, çӗнӗ пурăнăç йӗркисене хирӗç пыратăр. Тӗттӗме пӗтермелле!

Парăр хăвăр аҫăрсене шкула!

— Да-ешь школу! харăс, хытăрах çухăрҫӗç пионерсем.

Шкул уçас шухăшлă çынсем хăпартланҫӗç. Канаш вулакан старик, пионерсене курсан, куçӗ шывлансах кайрӗ.

— Ара, халăх, йепле кунпек хăйсем шкул ыйтакан аҫасене шкул туса памăпăр! Намăс пулаť, пире халăх!

Арман хуçипе куштансен пиҫӗ-куçӗсем улшăнҫӗç. Унталла, кунталла хăйсене майлă

çынсем шыраса кăн-кан пăхкаларĕç.

Пуйан Кришша хăй ывăлĕсене пионерсем хушшинђе курсан, кĕл пек шуралса кайрĕ. Пит хытă çиленсе кайса вăл хыттăн, йатлаçнă пек калама тытăнђĕ:

— Кирлĕ мар пире шкул! Веç ав, шкулта вĕренес ађасем мĕнле çўреççĕ. Кун пек пĕђĕккисем ваттисен ĕçне пырса пўлни тĕнђе çуралнăранпа та пулман. Килĕшўсĕр йапала ку! Вĕсене каккуй шкул! Хулă илмелле те, пĕтĕмпе хĕнесе йамалла.

Халăх сĕр-р-р кĕрлесе йађĕ. Куштансемпе Пуйан Кришша шухăшлисем пĕр майлă, шкул уçас текенсем ĕнтĕ, (халĕ нумайланса) тепĕр майлă.

— Да-ешь шко-лу! виççĕмĕш хут йантратса йађĕç пионерсем.

Ђылайђђен тавлашсан, кĕрлесен сасăларĕç те, çурта шкул вађђи йусамалла турĕç. Вулăс канашĕн ђленĕ çавăнтах токăвăр çырма тытăнђĕ. Токăвăрĕ çапла пулнă: халăх икĕ ерне хушшинђе шкул çуртне йусаса парай, вуттине кирлĕ вăхăтра туртарай. Уђђитĕлне шалу уйесрен.

Пионерсемпе комсомолсем мĕнле килнĕ, çаплах салтаксем пек ĕретлĕн утса кайрĕç. Хăйсен шухăшĕ вырăна кĕнĕшĕн кашни пионер, кашни комсомол хавасланса утса пынă. Хĕрлĕ йалав пайан тĕттĕм йал урамĕпе çӳлĕрех çĕкленсе пырать.

Пуху саланма тытăнчĕ. Арман хуçинчен ерех ĕçнĕ çынсем кăмăлсăрланса пухуран пусран çапнă пек тухса кайрĕç.

Лапчăк картуслă Иван такçантанпа: çурт сутнă чухне ĕçкĕ пулать-ха тесе ĕмĕтленнĕскер, халĕ чĕлĕмне тата хытăрах шăлпа çыртса: шуйтансем, тесе такама йатлаçса тухса кайрĕ.

Пуйан Кришша пысăк хуйхă пулнă пек, пĕкĕнсе хутлансах кайнă пек туйĕнчĕ. Асаплăн, вăрăмăн сывласа хуллен чуркӳ хыçнелле утрĕ.

Пуп кухharки пионерсене хӳме шăтăкĕнчен пăхса ăсатса йачĕ. Пĕчĕкрен пуп патĕнче пупа хисеплесе, турăран хăраса ӳснĕ ватă хĕр, халĕ пионерсем иртсе кайсан çăмăллăнах сывласа йачĕ.

— Ах, васпати, васпати! Мĕн хăтланаççĕ ку пионерсем. Пуп çуртне шкул тутарма илчĕç. Антихрист чĕпписем, ах, васпати

памилай, тесе темиçе хут сăхсăхса илҫĕ те, пуп патне пухура мĕн пулни çинҫен калама кĕрсе кайрĕ.

Ваҥук киле таварăнсан савăннипе лара тăра пĕлмест. Амăшне пухура мĕн пулни çинҫен, икĕ ернерен шкула вĕренме каймалли çинҫен, темиçе хут васка васка каласа паҫĕ. Ваҥук амăшне ывăлĕ савăнни паха.

Ывăлĕпе пĕрле амăшĕ те хĕпĕртет.

Çывăрма выртсан Ваҥук такçанҫен çывăрса кайаймарĕ. Пĕҫĕк пуçри шухăшсем вĕçсе айаккалла, çӳлелле хăпараççĕ.

...Хамăр шкултан йулташсемпе вĕренсе тухатпăр та, вара икĕ сыпăклă шкула вĕренме кĕретпĕр. Ун ҫух епĕр вара комсомол. Икĕ сыпăклă шкултан тухсан, вара йе Хусана, йе Мускава кайатпăр.

Вырăн çинҫе ҫылайҫҫен çаврăнкаласа выртсан, Ваҥук хăрах аллине пит çăмарти айне ҫикрĕ те, савăнăçлă шухăшсемпе тутлăн çывăрса кайрĕ.

Шупашкар.
1925 ç. март уйăхĕ.

Хакĕ 8 пус.

Каталог книг, изданных Чувашгосиздатом, по требованию высылается бесплатно.

АДРЕС: г. Чебоксары, АЧССР. Чувашгосиздат